3591
44-29

ОТЕЧЕСТВЕННАЙ ВĂРÇĂ ГЕРОЙĔСЕМ

Пирĕн земляксем

С. ЭЛЬГЕР, А. АНТОНОВ



# ИВАН ПОЛЯКОВ

МАРКОВ

С. ЭЛЬГЕР, А. АНТОНОВ

# ИВАН ПОЛЯКОВ

*Совет Союзӗн
Геройӗ*

ЧӐВАШСЕН ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1944

## 1.

Совет Союзĕн Геройĕ Иван Кузьмич Поляков 1922-мĕш çулта, Çĕмĕрле районĕнчи Тури Кăмаша ялĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ-амăшĕ чухăн хресченсем пулнă. Колхозсем тума пуçласан, хаваслансах колхоза кĕнĕ.

Иван Поляков ача чухне, час-часах чирлесе пурăннă пирки, ырхан та имшеркке пулнă.

— Телейлĕ пулма кирлĕ манăн Ванька,—тет Поляков амăшĕ унăн ача чухнехи пурнăçне астуса.—Эпĕ ăна ӳссе çын пулать пулĕ тесе те шутламан. Нумай хĕн курнипе ача чухнеултă çул хушши утаймасăр пурăнчĕ, çавăнпах вăл тăван пиччĕшĕсенчен чылай пĕчĕк пулчĕ...

Ултă çул хушши вăл хăйĕн тантăшĕсем, юлташĕсем урамра епле вылянине чӳречерен кăна пăхса ларнă. Ачасемпе пĕрле выляса çӳресшĕн çуннă, анчах чир-чĕрĕсем ăна кун çути парасшăн пулман. Çапла вара вăл çичĕ çула çитсен тин утма, чупса çӳреме пуçланă, вăййа хутшăннă, тинех хăйĕн юлташĕсемпе танашнă.

Килте ĕçлекенсем пуррипе Ваньăна çӳреме ирĕк пулнă. Вăл юлташĕсемпе вăрмана кайса çӳренĕ, пулă тытма кайнă, таса сывлăшпа уçăлма уй-хире, улăхсене тухса çӳреме юратнă.

Каççерен, çемьери çынсем пурте киле пухăнсан, пĕчĕк Ваня ашшĕ-амăшĕпе пиччĕшĕсене паян ăçта кайнине, мĕн курнине, мĕн-мĕн тунине каласа кăтартнă. Ашшĕ-амăшĕ те, пиччĕшĕсем те ун сăмăхĕсене юратса итленĕ, çав хушăрах тата ăна йăвашшăн мĕн çинчен те пулин вĕрентсе каланă. Ваня вĕсен вĕрентĕвĕсене тимлĕн итленĕ.

1930-мĕш çулта вăл хăйсен ялĕнчи пуçламĕш шкула вĕренме кĕрет. Шкула Ваня хавассăнах çӳренĕ, тăрăшса

вĕреннĕ. Пуринчен ытла вăл пионерсем хĕрлĕ ялавсемпе, юрăсемпе çӳренине юратнă. Пиччĕшĕ вĕрентнипе, Ваня шкула кайиччченех сырма та, вулама та пĕлнĕ.

1934 çулти кĕркунне Иван Анат-Кăмашари кĕçĕн вăтам шкулăн 5-мĕш класне вĕренме кĕнĕ. Вĕренессе вăл вырăс чĕлхипе, физикăпа, математикăпа, историпе аван вĕреннĕ, физкультурăпа интересленнĕ.

1936 мĕш çулта кĕçĕн вăтам шкултан вĕренсе тухать те, колхоз ĕçне хутшăнать. 1938-мĕш çулта, Хĕрлĕ-Чутайри колхоз счетовочĕсен курсĕнчен вĕренсе тухса, колхоз счетовочĕ пулать. Колхозра орденоносец Толстовпа пĕрле пĕрлешӳллĕ хуçалăха çирĕплетессишĕн ăна вăйлатассишĕн, тырă-пулă тухăçлăхне хăпартассишĕн тимне хурса кĕрешет.

1938-мĕш çулта Кăмашара вăтам шкул уçăлать. Иван Поляков 8-мĕш класа вĕренме кĕрет. Вăл вăтам шкулта вĕреннĕ хушăра вăтам шкул ĕçĕнче хăш-пĕр улшăнусем пулаççĕ. Шкултa физкультура урокĕсем çех мар, çар ĕçне те вĕренме пуçлаççĕ. Çар ĕçне вĕренни вĕренекенсем хушшинче дисциплинăна та, вĕренӳ пахалăхне те хăпартма пулăшнă.

Поляков çар ĕçĕн урокĕсемпе ытларах интересленет, пушă вăхăчĕсене военный кабинетра ирттерет. Чаплă полководецсем—Суворов, Кутузов, Фрунзе, Чапаев, Котовский, Щорс çинчен тата Сталин, Ворошилов, Будённый маршалсен пурнăçĕсемпе çĕнтерĕвĕсем çинчен вулама юратать, вĕсем çинчен преподавательсемпе калаçать.

2.

Поляков 9-мĕш класра вĕреннĕ чух, унта военрук пулса Т. Афанасьев ĕçленĕ. Афанасьев ачасене вăрçăра пулнă паллă ĕçсем çинчен аван каласа пама пĕлнĕ, вĕренекенсем ăна тимлĕн итленĕ, ун пек эпизодсене татах ытларах каласа пама ыйтнă. Военрук вĕренекенсене

хăвăртах хăй аллине çавăрса илнĕ. Вăл уроксене тăрăшса хатĕрленсе лайăх ирттернĕ, военный кабинета кирлĕ япаласене те йăлтах туянса çитернĕ. Кабинетра картăсем, схемăсем, макетсем, плакатсем, противогазсем, медицина сумкисем, газсенчен сыхланмалли костюмсем, полководецсен портречĕсем тата ыттисем те пулнă. Военрук кăтартса панă тăрăх вĕренекенсем хăйсемех тĕрлĕрен макетсем, пособисем туса хатĕрленĕ. Иван Поляков ручной пулемёт макетне тунă.

Военрук вĕренекенсене тĕрлĕрен хĕçпăшал таврашĕсемпе паллаштарать. Поляков военрукăн хăвăрт та пултаруллăн тыткалакан аллисем винтовкăна е пулемёта епле çăмăллăнах уйрăм пайсем çине уйăрнине, вĕсене каллех майлаштарса лартнине яланах тимлĕн сăнаса тăнă. Юлашкинчен вăл хăй те çакна тума военрук пекех вĕренсе çитнĕ.

— Поляков Иван, пулемёт механизмĕ çинчен тата вăл епле ĕçленине каласа парăр,—тесе ыйтать военрук.

Поляков сĕтел патне тухать те аллине ручной пулемёт тытать, пулемёт пайĕсене кăларса çўлелле çĕклет, пурне те илтмелле хăш пайĕ мĕн тума кирлине татăклăн каласа ăнлантарать.

— Ларăр. Отлично,—тет ăна военрук.

Шкулти ачасенчен чылайăшĕ хĕçпăшал таврашне Поляков пек уçăмлăн пĕлеймен.

— Хăвăр пĕлни çинчен Поляков Иван пек тĕплĕн каласа парăр,—тет час-часах военрук.

Çар ĕçне вĕренесси военный кабинетпа çех чарăнса тăмасть. Военрук вĕренекенсене хĕлле те, çулла та, кĕркунне те, çуркунне те физкультура площадкине е штурмовой полоса çине илсе тухать. Çамрăксем хырăмпа шуçма, бум тăрăх утма, забор урлă каçма, штыкпа чикме, хăвăрт окоп чавса унта вырнаçма тата ыттисене те вĕренеççĕ. Хĕллехи вăхăтра Поляковсен йĕлтĕрпе 10, 15, 20 километрлă кроссем тăвасси те часах пулкаланă. Йĕлтĕр кросĕсен маршручĕ Кăмаша—Çĕмĕрле е Кăма-

ша—Сăр шывĕ пулнă. Çак кроссенче яланах чи малтан Поляков Иван çаврăнса çитнĕ. Вăл чăнах та питĕ ăста йĕлтĕрçĕ пулнă. Юлташĕсемшĕн те, учительсемшĕн те инструктор вырăнĕнче шутланнă. Физкультурăпа спорт ĕçĕсене вăл колхозри тата промысла артелĕнчи çамрăксем хушшинче те анлăн сарса янă. Вĕсем вара промкоопераци союзĕ кашни çул туса ирттерекен пĕтĕм республикăри йĕлтĕрçĕсен кросне те хутшăннă.

Промкооперацин 1941 çулта ирттернĕ республикăри йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕнче Иван Поляков 10 километр чупассипе иккĕмĕш вырăна, 15 километр чупассипе пĕрремĕш вырăна тухнă.

Иван Поляков йĕлтĕрпе çех мар, конькипе те маттур ярăннă.

Пĕрре Поляков юлташĕсемпе пăр тăрăх ярăнса шкула кайнă. Пур вырăнта та пăр çирĕпех шăнман пулнă. Поляков пуринчен малта ярăнса пынă. Хăвăрт пынă хушăра пĕр тĕлте пăр йăтăнса аннă та, унăн кăçачĕсене шыв тулса ларнă, унран хăш-пĕр юлташĕсем кулма пуçланă, хăшĕсем тата часрах килне таврăнса ăшăнма сĕннĕ. Вăл вĕсем каланине хăлхана чикмен. Кăçачĕсене хывса шывне тăкнă та, пăр тăрăх тата хытăрах ярăнса шкула вĕçтернĕ.

Класра юлташĕсем каллех кулма тытăннă. Поляков вĕсене хирĕç:

— Çар пурнăçне пиçĕхес тесен, çавăн пек пулмалла та,—тесе çех тавăрнă. Юлташĕсем кулма чарăннă.

Вăтам шкулта вĕреннĕ вăхăтра Иван Поляков комсомола кĕрет. Çавăнтан пуçласа вăл ялти комсомол организацин чи хастарлă ĕçлекен членĕсенчен пĕри пулса тăрать.

3.

1941-мĕш çулăн илемлĕ çу кунĕсем. Уй-хирсенче вăйлă тырă-пулă кашласа çитĕнет. Фабрикăсем, заводсем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлесе ĕлĕкхинчен ик-виçĕ хут ытларах

продукци кăларса тăраççĕ. Пĕтĕм совет ĕçхалăхĕ ырă пурнăçпа, ырă кунсемпе савăнать. Тăван çĕршыва унăн пуянлăхĕшĕн, унăн пултарулăхĕшĕн юратаççĕ, ăна ялхуçалăхĕнче те, промышленнăçра та стахановла ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем туса пулăшаççĕ.

Июнĕн 22-мĕш, вырсарникун. Пĕтĕм Кăмаша халăхĕ сасартăк вăрçă пуçланни çинчен калакан хыпара илтет. Урамра, промысла кооперативĕн артель çурчĕ умĕнче, халăх пухăнса тăрать. Кунтах митинг пуçланать. Артель председателĕ Елюков юлташ, митинга уçса, гитлерла Германи пирĕн чечекленекен тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла майпа вăрçăпа тапăнни çинчен сăмах калать. Ун хыççăн трибуна çине çĕнĕрен çĕнĕ ораторсем, пĕрин хыççăн тепри туха-туха калаççĕ. Вĕсем пурте фашистла Германи çине тарăхса çиллĕ сăмахсем калаççĕ, рабочисене, колхозниксене тăван çĕршывшăн хаяр çапăçăва тухмашкăн хатĕр тăма чĕнеççĕ.

Çак ораторсем хушшинче пирĕн Ваня Поляков та комсомолецсен ячĕпе тухса хĕрӳллĕ сăмах калать.

— Ылханлă Гитлерăн вăрă-хурахла çарне эпир çĕнтеретпĕрех!—тесе вĕçлет хăй сăмахне Поляков.

Кăмашари çамрăксем нумайăшĕ Хĕрлĕ Çар ретне тăрса, сынçиекен Гитлер çарне хирĕç çапăçма тухса каяççĕ. Вăрçă пуçлансанах Иван Поляковăн пиччĕшĕсем—Василипе Миша та фронта каяççĕ. Ваня, çамрăк пулин те, тӳссе тăраймасть. Унăн та часрах фронта çитсе ирсĕр Гитлер çарне хирĕç пиччĕшĕсемпе пĕрле тăрса çапăçас килет. Пиччĕшĕсен фронтран килекен çырăвĕсем Иван чĕрине канăç памаççĕ. „Хăçан эпĕ те, вĕсем пек кайса, нимĕç йыт кĕтĕвĕсене аркатăп-ши?"—тесе çунать вăл текех.

Ака вăл ăшĕ çуннине тӳсеймесĕр, Çĕмĕрле военкоматне: „Мана халех фронта ярăр"—тесе ыйту çырса парать. Анчах та военкомат ăна тăхтамашкăн хушать. „Çамрăк-ха эс, тăхта. Вăхăт çитсен хамăрах чĕнĕпĕр"—тесе пĕлтереççĕ ăна военкоматран. Нумай кĕтрĕ Иван повестка

илессе, анчах та кĕтсе илеймерĕ. Хĕле хирĕç Поляков Кăмаша ялсовет секретарне ĕçleme кĕрет. Район центрне каймассерен военкомата кĕрсе тухать, повестка хăçан пуласси çинчен ыйтать.

Пĕррехинче комиссар ăна çар училищине вĕренме ярасси çинчен каласа парать. Поляковăн хăçан, ăçта ярасси çинчен пĕлес килет. Анчах та комиссар ăна: вăхăт çитсен пĕлетпĕр,—тесе çеç ответлет.

Юлашкинчен вара, çуркунне çывхарнă вăхăтра, Иван Поляковăн нумайранпа çулăмланнă ĕмĕтне тултармалли самант çитет. 1942 çулти март уйăхĕнче ăна Краснодара, пехота валли вăтам командирсем хатĕрлекен училищăна, яраççĕ. Поляков çавтери хавасланать.

Вăл хăйĕн тăван çемйипе тата ял-йышĕсемпе питĕ кăмăллăн та савăнăçлăн уйрăлса тухса каять.

— Ялти шкулта вĕреннĕ чух илнĕ оборона значокĕсем вырăнне, орденсемпе килĕп,—тет вăл учительсемпе, юлташĕсемпе, колхозниксемпе сывпуллашнă чух.

4.

Краснодарти çар училищинче Иван Поляков 1942-мĕш çулти июль уйăхĕччен вĕренет. Вĕренӳре хăйĕн пултарулăхне тата маттурлăхне кăтартать, лейтенант пуласшăн пĕтĕм вăя хурса тăрăшать. Анчах та вĕсен училищăна вĕренсе тухма май килмест. Фронт çывхарса пынă пирки, курсантсен пурин те вăрçа тухса каймалла пулать.

Çуллахи шăрăх кунсем тăнă. Тискер Гитлер çарĕ Кубане çитсе кĕрет. Çав тери хаяр, юнлă çапăçусем пыраççĕ. Çак вăхăтра вара Иван Поляковăн, алла хĕçпăшал тытса тăван çĕршыва тăшманран сыхлама, хĕрӳллĕ çапăçăва Краснодар хули патĕнче хутшăнма лекет.

Фашистла нимĕçсен урнă йыт кĕтĕвĕсем, хăйсен фюрер приказне пурнăçлама тăрăшса, пысăк çухатуне пăхмасăрах Баку енне тата Атăл патнелле талпăннă. Чакакан Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрле Поляков тăракан курсантсен полкĕ

те каялла куҫса пынӑ. Чакнӑ чух вӗсем нумай вырӑнта чарӑна-чарӑна тӑрса нимӗҫсемпе хаяррӑн ҫапӑҫса илнӗ.

## 5.

1943-мӗш ҫул. Январь уйӑхӗ. Ҫанталӑк япӑх тӑрать: е шартлама сивӗсем, е ҫил-тӑман ҫавӑрать, е кӑнтӑр енчен ӑшӑ ҫил вӗрсе хӑвӑрт ирӗлтерсе пӑрахать те — часах уяртса каллех шӑнтса лартать. Ҫак вӑхӑтра ӗнтӗ Иван Поляков хӑйӗн чаҫӗпе пӗрле Сталинграда пырса ҫитнӗ. Унта вӑл Сталинград патӗнче хупӑрласа хунӑ ирсӗр нимӗҫ ҫарӗсене пӗтерес ӗҫе хутшӑннӑ.

— Парӑнасшӑн мар ҫӑхансем! — тенӗ Поляков, хӑйӗн автоматӗнчен тӑшман ҫине тӑхлан ҫумӑрӗ ҫутарса.

Акӑ тӑшманӑн Сталинград хулинче пӗр ҫирӗплетнӗ пункт ҫеҫ тӑрса юлать. Тӑшмана унтан сирпӗтсе кӑларсан, Сталинград ирӗклӗнех сывласа ярӗччӗ, анчах фрицсем хӗҫпӑшалӗсене пӑрахмаҫҫӗ. Вӗсем усал ӳпресемпе пӗрех, вилӗм ҫывхарса килнине сиссе, хытӑрах ҫыртаҫҫӗ, ишсе пӗтернӗ ҫуртсенчен, подвалсенчен персе лараҫҫӗ. Фрицсем Гитлер шантарнӑ пулӑшӑва илессе хытӑ кӗтеҫҫӗ, анчах та Хӗрлӗ Ҫар вӗсене ҫирӗп хурҫӑункӑпа кӑшӑлланӑ, ниҫтан та ҫӗмӗрсе тухма май памасть. Хупӑрланнӑ тӑшманӑн ӗмӗрӗ те нумаях пырас ҫук ӗнтӗ, анчах ҫапах та вӑл хирӗҫме чарӑнмасть. Хӗрлӗ Ҫар ҫак тӑшмана юлашки йӑвисенчен хире-хире кӑларать.

Поляковсен роти Крестьянски урамӗнче наступлени туса пынӑ. Пӗр тӑватӑ хутлӑ пысӑк чул ҫурт тӗлне ҫитсен, Полякова хӑйпе пӗрле пыракан Бондаренко ятлӑ юлташӗ:

— Айта ҫак ҫурт ӑшне кӗрсе пӑхатпӑр. Унта, тен, фрицсем пытанса ларман-и?.. Ҫӗмӗретпӗр вӗсене, — тенӗ.

Бондаренко хӑюллӑ украинец. Поляков вӑл каланипе килӗшнӗ. Вӗсем пӗр хӑраса тӑмасӑр иккӗшех ҫурт ӑшне кӗрсе кайнӑ. Поляковӑн крыльцара кӑшт тытӑнса тӑмалла пулнӑ, Бондаренко ҫурт ӑшне малтан пырса кӗнӗ.

Унта нимĕç салтакĕсем пĕр 30 çынна яхăн шăппăн пытанса тăнă пулнă.

Бондаренко алăк уçса кĕрсенех, пĕр нимĕç фашисчĕ ун çине сиксе ларнă та, çĕрелле пусса антарса ăна мăйран пăвма тытăннă. Бондаренко кăшкăрасшăн пулнă, анчах кăшкăрма сасси тухман, хыттăн хăрăлтатнă анчах. Вăл хăрăлтатни тулах илтĕннĕ. Поляков, ку хăрăлтату ырă мар иккенне сиссе, хăй юлташĕ патне чупса кĕнĕ. Унта нимĕн тытăнса тăмасăрах, хăй юлташне пăвакан фашист патне вăркăнса пырса ăна автомат ложипе пуçĕнчен пĕрре кăна çапнă. Фашист çавăнтах чăсăлса ӳкнĕ. Ирĕкленнĕ Бондаренкопа Поляков ытти нимĕçсене автоматран çунтарма тытăннă. Сехри хăпнă нимĕçсем картлашкапа 2-мĕш этажа тарса хăпараççĕ. Вĕсем хыççăн Поляковпа юлташĕ те хăпараççĕ. Кусем нумайăн килеççĕ пулĕ тесе нимĕçсем вĕсене хирĕç тăма хăяймаççĕ, пăшалĕсене пăрахса пурте аллисене çĕклеççĕ. Çапла вара 20 ытларах нимĕç салтакĕ икĕ боеца парăнать.

Иккĕн 20 нимĕçе тыткăна илнĕшĕн, Поляковпа Бондаренкона „За отвагу“ медальсем парса наградăлаççĕ.

Çĕршер, пиншер боецсем Сталинграда ирĕке кăларассишĕн вилĕмрен хăрамасăр паттăрăн çапăçаççĕ.

Паттăр боецсем тăшман вырнаçса ларнă юлашки пункта штурмлаççĕ. Пуринчен малтан тăшман çине чăваш ачи, лейтенант Филиппов Михаил, боецсене хавхалантарса кĕрсе каять. Чи хĕрӳ çапăçу вăхăтĕнче тăшман пулли лейтенанта амантать. Аманнă Филиппов боевой задание пурнăçличчен çавăнтах командăсем парса, сулахай айăкĕ çинче выртать. Çавăн пекех йывăр аманнă пулемётчик Николаев та çаплах пулемётран персе выртать. Сержант Горшков, хăй вилесрен хăрамасăр, çунма пуçланă мина ещĕкне хупласа сӳнтерет. Юлашки штурмлă çапăçура кашни боецах чунне парса кĕрешет. Ефрейтор Иван Поляков та вĕсенчен юлмасть. Вăл çак çапăçура хăйĕн автомачĕпе темиçе вунă фрица „леш тĕнчене“ ăсатать, темиçе нимĕçе чĕрĕллех тытса илет.

Хĕрлĕ Çар хăйĕн пысăк задачине пурнăçлăн пурнăçларĕ. Сталинграда кĕрсе хупăннă гитлеровецсен юлашки ушкăнне пĕтерсе тăкаççĕ. Тискер тăшман тапăнăвне хирĕç чул сăрт пек тăнă Сталинград ирĕклĕн сывласа ячĕ. Унăн урамĕсенче тупă, миномёт, пулемёт сассисем 1943 çулхи февралĕн 2-мĕшĕнче шăпланаççĕ. Шăпланнă пулин те хула хушшинче кичем-ха. Пур çĕрте те ишĕлӳ, аркану... Çавах та нумай кĕтнĕ çĕнтерӳ кунĕ çитрĕ. Сталинград çинче пур çĕрте те çĕнтерӳ хĕрлĕ ялавĕ вĕлкĕшет. Унта та кунта фрицсен вилли. Тыткăна лекнĕ тискер фашист салтакĕсене хуса иртеççĕ. Вĕсем хушшинче офицерсем те, генералсем те пур. Çав шутра Поляков тыткăна илнĕ фрицсем те пулнă.

## 6.

Сталинграда ирĕке кăларнă çĕрте паттăррăн çапăçнăшăн Поляковсен чаçне гвардейски ятне панă.

Нимĕçсен Сталинград патĕнчи çарне пĕтерсе тăксан, пĕр уйăх ытларах канса тăнă хыççăн, Поляковсен гвардейски дивизийĕ малтан Воронеж енне, унтан Харьков патнелле куçса пынă. Унта вăл Донец шывĕ хĕррипе оборона линине йышăнса тăнă.

Çĕнĕ вырăнта Иван Поляковăн вăхăтлăха связист пулса ĕçлеме лекнĕ. Пĕр çапăçу вăхăтĕнче Полякова командовани задани панă. Нимĕçсен хыçне юлнă 6-мĕш ротăпа батальон штабĕ хушшинчи çыхăну татăлнă. Халех çав ротăпа çыхăнса тăмалли телефон линине тĕрĕслесе тухмалла, татăлнă вырăнсене сыпса тӳрлетмелле, тенĕ ку задани. Задание пурнăçа кĕртме Поляковăн тăшман йышăнса тăракан позици хушшипе тухса каймалла пулнă. Поляков хăраса тăман. Вырăнĕпе вăрттăн йăпшăнса, тĕлĕтĕлĕпе хырăм çинче шуса кайса вăл çыхăну линине тӳрлетсе тухнă. 6-мĕш ротăпа батальон штабĕ хушшинчи çыхăнăва çĕнетнĕ. Çак майпа нимĕçсен хыçне юлнă ротăна та пулăшу парса пысăк çухату тумасăрах хăтарнă.

Командовани панă задание матур пурнăçланăшăн Иван Полякова Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă.

Гварди ефрейторĕ Поляков разведка ĕçĕнче те хастарлăн çӳренĕ. Вăл хăйĕн отделенийĕпе час-часах разведкăра пулса, Хĕрлĕ Çара ăнăçлă çĕнтерӳсем тума нумай пулăшнă. Çакăн пек, пĕрре, Поляковсен гвардейски чаçĕ Полтава облаçĕнчи Лохвица ятлă хула патне маларах çитсе тухнă. Нимĕçсем ку хула патĕнче вăйлăн хирĕç тăма хатĕрленнĕ пулнă. Вĕсем хулари пур çуртсенчен те тенĕ пекех дотсем туса хунă. Анчах та разведка лайăх ĕçленипе хулана пирĕннисем юн тăкмасăрах хăвăрт çавăрса илнĕ. Хулана илессишĕн пынă разведкăра Поляков отделенийĕ те ĕçленĕ. Тепĕр тапхăрĕнче Иван Поляков отделенийĕ разведкăран час таврăнайман. Ку вара пурне те шиклентернĕ. Чылай вăхăтран тин акă мĕн паллă пулнă. Иван Поляков хăйĕн отделенийĕпе нимĕçсен поездне чарса, Германие чуралăха илсе каякан темиçе пин совет граждăнне хăтарнă.

Тепре тата Поляковсен подразделенине нимĕçсен вăйне çапăçупа разведка туса пĕлме хушнă.

— Кам хăй ирĕкĕпе разведкăна кайма килĕшет? — тесе ыйтать взвод командирĕ.

Пуринчен малтан Поляков Иван сиксе тухать.

— Эпĕ килĕшетĕп, — тет вăл.

Çапла вĕсем, пĕр вунпилĕк çын ушкăнланса, тăшман позицийĕ енне тухса каяççĕ. Разведчиксен ушкăнĕн командирĕ Поляков пулать. Варсем тăрăх, вăрмансем витĕр, вак-тĕвек йывăç тĕмисем хушшипе йăпшăнса пыраççĕ разведчиксем.

Нимĕçсем пирĕн разведчиксене асăрхаççĕ те пеме тытăнаççĕ. Поляковсем лăпчăнса выртаççĕ. Хăйсем хăш вырăнта выртнине пĕлтерес мар тесе, вĕсем хирĕç пемеççĕ. Нимĕçсен окопĕнчен пĕр ушкăн салтак тухать те, Поляковсене шыраса малалла шăвăнса пырать.

Поляков хăйĕн ушкăнне икĕ пая уйăрать. Пĕр пайне вăл, чакнă пек туса, каялла кайма хушать. Тепĕр пайне

хӑй вырӑнӗнчех выртса юлма калать. Хӑй иккӗмӗш ушкӑнӗпе пӗрле вyртса юлать.

Нимӗҫсем пирӗн каялла чакса каякан ушкӑна хӑвалама пуҫлаҫҫӗ. Чакакан разведчиксене хуса кайма пикеннипе вӗсем хӑйсен хыҫне выртса юлнӑ Поляков ушкӑнне нимӗн те асӑрхамаҫҫӗ. Нимӗҫсем хӑйсен тӗлӗнчен иртсе кайсанах Поляков вӗсене автоматсенчен персе ҫунтармашкӑн хушать. Поляков ушкӑнӗ пеме тытӑнсанах нимӗҫсем ҫине пирӗн чакса тарнӑ пек тунӑ разведчиксен ушкӑнӗ те, пеме пуҫлать. Икӗ енчен перекен вут хушшине пулнӑ нимӗҫсем ниҫта кайма пӗлмесӗр ӑшаланаҫҫӗ, аптранипе ҫӗр ҫумне лӑпчӑнаҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн Поляков ушкӑнӗ те, тата каялла тарнӑ пек тунӑ разведчиксен ушкӑнӗ те, хыттӑн „урра!" кӑшкӑрса, нимӗҫсем ҫинелле ыткӑнаҫҫӗ. Хӑраса ӳкнӗ нимӗҫсем, пӑшалӗсене пӑрахса, аллисене ҫӗклеҫҫӗ. — Гитлер капут! — тесе тӑраҫҫӗ вӗсем, хӑйсем патне пирӗн разведчиксем ҫитнӗ чух.

Ҫирӗм салтак та пӗр офицер тыткӑна парӑнаҫҫӗ.

— Чим-ха, кусене лайӑхрах тӑна кӗртер, — терӗ Поляков хӑйӗн юлташӗсене. — Хамӑр часть патне ҫитиччен вӗсене уттарса мар, хырӑм ҫинче шутарса каяр. Уттарса кайсан тата, окопри нимӗҫсем курса, хыҫалтан пеме пултараҫҫӗ, — тет вӑл. Вара тыткӑна илнӗ тӑшман салтакӗсене пӗр ҫухрӑм хушши хырӑм ҫинче шутарса илсе каяҫҫӗ.

Сталинград хыҫҫӑн Поляковӑн Харьков тата Красноград хулисемшӗн пынӑ хаяр ҫапӑҫусем асран каймаҫҫӗ. Красноград хулишӗн ҫапӑҫнӑ чух вӗсен пӗтӗм дивизийӗ палла тухнӑ. Ҫакӑншӑн вӑл дивизие Верховный Главнокомандующи приказӗпе „Красноградская гвардейская стрелковая дивизия" ятне парӑҫҫӗ.

Ҫакӑнти ҫапӑҫусенче Поляков Иван хӑйӗн паттӑрлӑхне, вилӗмрен хӑраманнине тата ытларах кӑтартнӑ. Боевой заданисене яланах кӑтартуллӑн пурнӑҫласа пынӑ. Вӑл пӗтӗм дивизире чаплӑ боецсен шутӗнче тӑнӑ; унӑн пултаруллӑ ӗҫӗсем ҫинчен фронтри „Советский богатырь" ятлӑ хаҫатра темиҫе хутчен те ҫыраҫҫӗ.

## 7.

Хĕрлĕ Çар, хăватлăн çĕнтерсе пырса, аслă юханшыв Днепр хĕррине çитсе тăрать. Ирсĕр Гитлер çарĕсене пĕтĕмпех Днепр леш енне хăваласа ывăтаççĕ. Пирĕн çар тăшмана малалла та çĕнтерӳллĕн хуса каймалла. Анчах та сарлака шыв урлă хăвăрт каçса кайма çук. Совет çарне Днепр урлă каçарас мар тесе, нимĕçсем унăн сылтăм енчи çыранне вăйлăн тĕреклетеççĕ.

Днепр... Сарлака та илемлĕ юханшыв вăл. Ăна курсанах Иван Поляков çак юханшыв çинчен вырăссен чаплă писателĕ Н. В. Гоголь çырнă сăмахсене аса илет.

«Ытарма çук Днепр çанталăк тӳлек тăнă чух, вăл хăй тулăх шывне вăрмансем, сăртсем хушшипе ирĕклĕн те тулăххăн ярăнтарса юхнă чух Днепр ытарма çук илемлĕ. Днепрваррине никам та пăхма пултараймасть: пĕр хĕвелпе шенкер уяр пĕлĕтрен пуçне ун варрине никам та пăхаймасть. Днепр варрине сайра-хутра вĕçен кайăк кăна вĕçсе çитет. Чечен вăл! Унпа танашакан юханшыв тĕнчипе те урăх çук. Илемлĕ Днепр — çуллахи ăшă каçхине, илемлĕ вăл — этемĕ те, тискер кайăк та, вĕçен кайăк та çывăрнă вăхăтра...

Илемлĕ Днепр — тӳперен аслатиллĕ кăвак пĕлĕтсем иртнĕ чух та: хура вăрман тĕпрен тайкаланать, юмансем шатăртатаççĕ, пĕлĕтсем хушшипе çиçĕм хуçкаланса çиçет те сасартăк пĕтĕм тĕнчене çутатса ярать, — анчах çакăн пек чух хăрушă та çак Днепр!..“ тесе çырнă Гоголь.

Çак сăмахсем Иван пуçне сасартăк пырса кĕреççĕ. Ăна вăл шкулта, 9-мĕш класра вырăс литературине вĕреннĕ чух, темиçе хут та вуланă. Чăнах та Днепр пуриншĕн те тĕлĕнмелле. Анчах та халĕ вăл хăрушă: снарядсемпе минăсем уласа çех вĕçеççĕ унăн урлă.

Нимĕçсем, Хĕрлĕ Çар малалла хăвăрт куçса пынинчен хăраса, нимĕн тĕлсĕр тата пĕр чарăнмасăр персе тăраççĕ Днепр урлă. Вĕсем фронта Днепр тăрăх тытасшăн тă-

рăшаççĕ. Вĕсен батарейĕсем пĕр минут та пемесĕр тăмаççĕ. Минăсемпе снарядсем Днепрăн сулахай çыранне вĕçсе касса çурăлаççĕ.

Илемлĕ аслă Днепр! Хăрушă мĕн çак илемлĕ Днепрах!

Разведка пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Днепр шывне минăланă, унăн çыранĕсене те пур çĕре те минăсем лартса тухнă. Кашни тĕмĕ, кашни йывăç хыçĕнчех нимĕç автоматчикĕсемпе снайперĕсем тăрса, юханшывăн сулахай енче пирĕннисем хускалнисене сыхласах тăраççĕ. Апла пулин те, Хĕрлĕ Çар Днепр урлă каçма хăвăрт хатĕрленсе çитет.

## 8.

Каçхине Поляков нимĕçсем темле шăпланнине асăрхарĕ. Днепр çинче пĕр сехетлĕхе шăплăх, тŷлеклĕх пулса тăчĕ. Вăл анчах „Чуден Днепр при тихой погоде...“ — тенĕ сăмахсене аса илсе шухăша кайнăччĕ. Унччен те пулмарĕ, ăна хăйсен ротине Днепр урлă каçса майлă плацдарм йышăнма тата çыхăну рацине вырнаçтарма хушакан приказ пани çинчен пĕлтерчĕç.

Днепр урлă каçмалли паромсене, лодкăсене нимĕçсем йăлтах хăйсемпе пĕрле юханшывăн тепĕр çыранне илсе кайнă е пĕтерсе хăварнă пулнă. Вĕсене çĕнĕрен туса тăма час пулмасть. Çавăнпа пирĕн командовани каçмалли япаласем вырăнне ал айне мĕн лекет—çавсемпе усă курма хушать. Боецсем хăшĕ алăк-хапха, хăшĕ хăма, хăшĕ пĕрене таврашĕсем тупса хатĕрлеççĕ, хăшĕ пĕчĕк сулăсем тăваççĕ. Каçма çăмăл пултăр тесе çири шинельсене, урари ботинкăсене хываççĕ, кашниех харпăр хĕçпăшалне тĕрĕслесе пăхать, пемелли боеприпассем ытларах илсе хатĕрленет.

Тĕттĕм сентябрь каçĕ... Çурçĕр иртсен шăпах икĕ сехет тĕлĕнче Днепр урлă каçма приказ пачĕç. Боецсем пĕр сас-чŷ кăлармасăр алăксене, хăмасене, пĕренесене йăтса тŷлеккĕн ярăнса юхакан Днепр хĕррине анчĕç те,

кам мĕн çĕклесе пынă—çавăн çине ларса тĕттĕм юханшыв варринелле ишме тытăнчĕç. Поляков пĕр алăк пек хăма татăкĕ çинче ишсе пырать. Вăл Днепр урлă каçакансен чи малти ретĕнче. Никамăн та ни ӳсĕрме, ни каласма юраман. Пуринĕн те ăшра пĕр шухăш кăна: часрах, тăшман сисиччен ишсе каçасчĕ те, Днепрăн тепĕр çыранĕ хĕрринче çирĕпленсе ларасчĕ, тесе çеç шухăшлаççĕ.

Акă Хĕрлĕ Çар паттăрĕсем—гвардеецсем тăшмана систермесĕрех Днепрăн çуррине ытла ишсе каçаççĕ. Сасартăк нимĕçсем енчен ракетăсем чарлатса хăпараççĕ: тĕттĕм тавралăх тата Днепр çийĕ çап-çутă çутăлса каяççĕ. Ку çутăра пирĕн ишсе каçакан гвардеецсем те аякранах курăнаççĕ. „Акă сисрĕç, курчĕç!" текен шухăш вĕлтлетсе илет кашни боец пуçĕнчех. Унччен те пулмасть, тăшманăн минисем шăхăрса вĕçсе лăпкă Днепрăн анлă кăкăрĕ çине пырса ӳкеççĕ. Ракета хыççăн ракета ялкăшать, вĕсем аслă юханшыв питне кăшт та каçхи тĕттĕмпе хупланма памаççĕ ĕнтĕ. Вĕсен çуттипе усă курса, нимĕçсем Днепр çинчи ишсе каçакан боецсем çине пулемётсемпе миномётсенчен те пеме пуçлаççĕ. Вĕсене хирĕç пирĕн те тепĕр çыранран пеме тытăнаççĕ. Унта та кунта мина ӳксе çурăлать, шыв сике-сике йĕри-тавра сирпĕнет, тавраллах вĕри тăхлан пуля çуса тăрать. Нумай та пулмасть тӳлек те шăппăн выртнă аслă юханшыв çийĕ хаяр кăпăк кăларса хумханмашкăн пуçлать. Боецсем айĕнчи пĕчĕк сулăсем, алăксем, хăмасем турпас татăкĕсем пек кăна сиккелеççĕ. Аслă шыв юхăмĕ вĕсене, тем пек васкаса ишсен те, анаталлах туртса каять.

Днепрăн нимĕçсем тăракан енчи çыранĕ чăнкă та чуллă-сăртлă çыран. Поляков, алăк çинче выртса пыракансскер, çыран хĕррине пуринчен маларах ишсе тухрĕ. Типĕ çĕр çине ярса пуссанах вăл автоматне алла тытса хытă чăмăртарĕ, пĕр чарăнса тăмасăрах чăнкă çыран сăртнелле чупса кайрĕ. Çав самантра Поляков хăйне хирĕç ыткăнса пыракан пĕр тăсланкă нимĕç салтакне курчĕ. Вăл автоматне малалла кăнтарнă та Полякова тĕллесе пырать.

„Ме, чых, йытӑ, совет кучченеҫне!“—терӗ те Поляков, нимӗҫ ҫине пӗр черет пуля кӑларса ячӗ. Вӑрӑм нимӗҫ аллисене саркаласа ҫӗре персе анчӗ. Курать Поляков—татах тепӗр фриц чупса пырать. Ӑна та ҫавӑнтах персе ӳкерчӗ. Ҫак самантра ҫырана тухнӑ ытти боецсем те Поляков патне чупса ҫитеҫҫӗ.

Чылайӑн каҫса ҫитнӗ боецсем хӑватлӑн—урра! кӑшкӑрса яраҫҫӗ те:—Тӑван ҫӗршывшӑн! Сталиншӑн!—тесе, нимӗҫсен малти окопӗ ҫинелле вӑркӑнса кӗрсе каяҫҫӗ. Чупса пынӑ вӑхӑтрах автоматсенчен переҫҫӗ, пулеметран сунтараҫҫӗ, гранатӑсем ывӑтаҫҫӗ. Нимӗҫсем чӑтса тӑраймаҫҫӗ, окопӗнчен тухса тараҫҫӗ. Ҫапла вара Поляковсен ушкӑнӗ тул ҫутӑлса ҫитиччене Днепрӑн сылтӑм ҫыранӗнче совет ҫарӗсем валли плацдарма аслӑлатасшӑн ҫапӑҫать. Нимӗҫсем пӗр лаптӑк ҫӗре те ахаль парасшӑн мар. Кашни тӗмеске, кашни лупашка хӳттипе усӑ курса вӗсем хытӑ персе тӑраҫҫӗ. Ҫак хушӑрах пирӗн Днепр урлӑ каҫакансем те ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ушкӑнсемпе ҫитсе тӑраҫҫӗ. Тул ҫутӑлнӑ вӑхӑта ҫӑмӑл орудисем те каҫса ӗлкӗреҫҫӗ.

Днепр урлӑ каҫакан гвардеецсене сылтӑм ҫыранра ҫирӗпленсе ҫитме пирӗн авиаци те нумай пулӑшрӗ. Совет самолӗчӗсем ҫыран хӗрринчи нимӗҫсем ҫине пӗр таттисыпписӗр тапӑнса пӗрмаях бомбӑсем тӑкрӗҫ, пулеметсенчен персе ҫунтарчӗҫ.

Нимӗҫсен темиҫе контратакине сирсе янӑ хыҫҫӑн, гвардеецсен чаҫӗсем Днепрӑн сӑртлӑ ҫыранне хӑпарса ҫитсе тӳрем ҫӗре тухаҫҫӗ. Кунта вӗсем пӗр яла йышӑнса илеҫҫӗ.

9.

Поляковсен ротине малалла кайма нимӗҫсен икӗ пулемӗчӗ кансӗрлет. Вӑл пулеметсем, пӗр-пӗринчен 600 метрта кукуруз уйӗ хӗрринче вырнаҫса тӑраканскерсем, Поляковсем ҫине пуҫа йӑтса пӑхма ҫук пуля тӑкаҫҫӗ. Ку пулемет йӑвисем курӑнасса та аванах курӑнаҫҫӗ, анчах та вӗсем патне ниепле те пыма майӗ ҫук.

Рота командирӗ Полякова тӑшман пулемӗчӗсене аркатса тӑкма приказ пачӗ. Поляков, хӑйне кукуруз ҫулҫисемпе витсе тумлаҥать те, сакӑр граната тата автоматне илсе хырӑм ҫинче шуса каять. Пит те ерипен хусканса, нимӗҫсем асӑрхами шӑппӑн шуса пырать Поляков пӗр пулемӗчӗ патне. Пулемёт йӑви патне ҫитесси 25 метр чухлӗ юлчӗ. Поляков чӗркуҫҫи ҫине тӑрать те умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ граната вӑркӑнтарать. Пулемёт шӑпах пулать. Пулемёт расчётӗнчи нимӗҫсенчен иккӗшӗ вилеҫҫӗ, пӗри тӑрса тарать. Поляков хӑвӑрт пулемёт патне чупса пырса ӑна тӗрӗслесе пӑхать. Анчах та вӑл ӗҫлемест— граната осколки тивнипе унӑн приёмникӗ саланса кайнӑ иккен.

Поляков иккӗмӗш пулемёт патне шӑвӑнчӗ. Анчах ку пулемӗчӗ патне шуса пыма ҫав тери йывӑр. Кӑшт ҫӗкленсенех е кӑшт та пулин ытларах хускансанах нимӗҫсем асӑрхама пултараҫҫӗ, вара хӑвӑн пуҫу та ҫавӑнтах пӗтме пултарать. Ҫавӑнпа та ҫӗр ҫумне ҫӑттӑн ҫыпҫӑнса, тӑшман асӑрхамалла мар хуллен шӑвӑнмалла. Ҫакна пула Поляковӑн 600 метр тӑршшӗне 2 сехет хушши шуса пымалла пулчӗ.

Пулемёт йӑви патне ҫитесси 30 метр юлать. Поляков каллех чӗркуҫҫи ҫине тӑчӗ те умлӑн-хыҫлӑн виҫӗ граната вӑркӑнтарчӗ. Пулемёт шӑпӑрт пулса ларчӗ. Унӑн расчётӗнче пулнӑ виҫӗ нимӗҫ ҫавӑнтах чунсӑр пулса выртаҫҫӗ. Поляков хӑвӑрт чупса пычӗ. Гашетка ҫине пусса пӑхрӗ, вӑл ӗҫлет. Пулемёт пӑсӑлман. Ун ҫумӗнчех патронлӑ ултӑ лентӑ тата тепӗр пуҫламан ещӗк ларать. Поляков савӑнса кайрӗ. Халӗ ӗнтӗ ку пулемёга тӳрех нимӗҫсем енне ҫавӑрса лартса, унпа хӑйсенех ҫунтарма та майӗ пур. Ку ещӗкне минӑласа лартман-ши тесе, Поляков асӑрханса шнур таврашӗ пурри-ҫуккине сӑнарӗ. Шнур курӑнмасть. Акӑ вӑл хӑюллӑнах ещӗке уҫса пӑхрӗ. Унта туп-туллиех „лимон" йышши ҫаврашка гранатӑсем. Ку пушшех аван ӗнтӗ! Анчах та нимӗҫсем ман ҫине кунта тӗллесех пеме пултараҫҫӗ, урӑх вырӑна куҫса

лармалла, тесе шутларĕ Поляков. Инçех те мар пĕр пĕчĕк окоп курăнать. Нимĕн тытăнса тăмасăр, Поляков малтан пулемётне, унтан патрон лентисемпе гранатăллă ещĕке те çав окопа куçарса лартрĕ.

Поляковсен роти ку вăхăтра чылай хыçалта, Днепр хĕрринче, хăйсене çул уçса парасса кĕтсе выртнă-ха. Поляков нимĕç пулемётчикĕсене пĕтерсе тăксан, рота малалла наступлени тума тытăнчĕ. Анчах та, çак сехетрех нимĕçсем те сулахай флангран вăйлă наступлени тума пуçларĕç. Вĕсем хытă хĕснипе пирĕн гвардеецсем каялла чакаççĕ. Поляков пăшăрханса ўкет. Хаяр çапăçупа юн тăкса илнĕ тăван çĕр лаптăкне унăн ниепле те тăшмана каялла парасси килмест. Тепĕр енчен тата пирĕн çар каялла чакни Полякова хăйне те хăрушлăха тăратса хăварать: вăл пĕччен тăрса юлать! Фашистсем ăна, пĕччен-скерне, часах тытса илме пултараççĕ. Унăн хăйĕн чакакан ротине вăй çитнĕ таран хăвăртрах пулăшу памалла. Апла пулсан, ку окопран тухса урăх вырăна, тăшманăн наступлени тăвакан çарĕ лайăхрах курăнакан вырăна куçса лармалла. Инçех мар пĕр çўллĕ тăвайкки курăнать. Поляков пулемётне тата граната ещĕкне çав тăвайкки çине сĕтĕрсе кайрĕ. Пĕр лупашкараваскасах пĕчĕк окоп туса вырнаçрĕ те, наступлени тăвакан нимĕçсене пулемётран сăптăрттарма тытăнчĕ.

## 10.

Нимĕçсем, хăйсене хыçран пулемётпа çунтаракан пуррине курсан, ăшталанса ўкеççĕ. Наступление чарса çĕр çумне лăпчăнаççĕ. Паллах, хăйсен наступленине çĕнĕрен пуçласа яриччен, халĕ ĕнтĕ вĕсен чи малтан Полякова пĕтерсе хума тивет. Фашистсем çапла тăвасса Поляков хăй те аванах чухлать. Унччен те пулмасть, нимĕçсем Полякова икĕ енчен çавăрса илеççе: сылтăмран та, сулахайран та. Вĕсем лăпчăна-лăпчăна чупса ун патнелле тăрăнаççĕ. Поляковăн аллисем чĕтремеççĕ. Патрон пур чух вăл хăюллăн çапăçать, мĕн курăнакан

фашистне пере-пере ӳкерет. Акă вăл тăшманăн малтанхи атакине сирсе ячĕ. Нумай та иртмест, нимĕçсем татах хупăрлаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем ăна йĕри-тавраллах çавăрса илсе чĕррĕн тытма тăрăшаççĕ: пулемётпа çулăнса ӳкнине пăхмасăрах, офицерĕсем хӳтернипе вĕсем малтан малалла сĕкĕнеççĕ, çывхарнăçем çывхараççĕ. Çапла Поляков, тăшман пулемёчĕпех усă курса, нимĕçсен тăватă атакине сире-сире ярать. Пуçсăрлансах çывхаракан нимĕç взвочĕсем, кашни атакăрах хăйсен речĕсем сайралса çитнине курсан, каялла тараççĕ. Вĕсем миномётран пемеççĕ-ха, Полякова чĕрĕлле тытса илмех ĕмĕтленеççĕ.

Анчах та тăваттăмĕш атакăна сирсе янă хыççăн Поляковăн патрон пĕтсе çитрĕ. Пулемётпа пеме çук. Гранатăсем пулсан та, вĕсемпе инçете персе çапăçмалла мар. Пулемёт шарламаннине кура, фрицсем харсăрланчĕç. Вĕсем ĕнтĕ ура çине тăрсах пăхма пуçлаççĕ.. Вăхăт нумай иртрĕ. Хĕвел те кăнтăрларан сулăнчĕ. Ку самантра пирĕн чакса кайнă войскăсем перкелешни те илтĕнмест. Поляковăн чĕри çӳçенмешкĕн тытăнать. Анчах вăл, пурĕпĕр, темĕн пулсан та тăшман аллине чĕррĕн парăнма шутламасть...

Тăшман çĕнĕ атака тăвать. Вĕсен салтакĕсем халĕ ĕнтĕ пĕр пытанмасăр, кăшт пĕшкĕнерех çеç чупа-чупа пыраççĕ. Поляковăн чĕри вĕчĕрхенет. Перĕччĕ, çулса тăкĕччĕ вăл вĕсене патронсем пулсан! Ирĕксĕрех тата çывăхарах ямалла. Акă фрицсем 25—30 метр тарана пырса çитрĕç. Поляков ещĕкри „лимонсене“ илсе тăшман пуçĕ çине вăркăнтарма тытăнчĕ. Гранатăсем хаяррăн шартлатса çурăлаççĕ, фрицсем кăшкăраша татăла-татăла анаççĕ. Çывăхарах чупса пынă нимĕççене Поляков хăй автоматĕнче юлнă юлашки патронсемпе пере-пере ӳкерчĕ. Тăшманăн каллех ĕç тухмарĕ! Унăн сывă салтакĕсем çĕр çумне лăпчăнаççĕ, шиклĕреххисем каялла тарма та пикенчĕç.

Тепĕр сехетрен каллех тепĕр атака пуçланчĕ. Поляков ку атакăна та гранатăсемпех ăнăçлăн сирсе ячĕ. Анчах

та халĕ ĕнтĕ ун пурĕ те вун-вуникĕ граната çеç тăрса юлчĕ. Автоматĕнчи патронĕ те пĕтрĕ. Тăшман тепĕр атака тусан, унăн пĕтмеллех пулать. «Пурнăç вĕçĕ çитрĕ, урăх нимĕн тума та, ниçта кайма та çук», тесе шутлать Поляков.

Кĕске сентябрь кунĕ вĕçленесси инçе мар. Хĕвел аякра кăвакарса тăракан тăвайкиллĕ вăрман хыçне анса ларма хатĕрленет... Ирĕклĕхе кĕтекен Украина çĕршывĕ, нумай тӳснĕ, асап курнă çĕршыв... Шенкер-кăвак тӳпе. Кĕрхи çанталăкпа сарăхнă уй-хир. Вăл хурлăхлă, анчах çавах та илемлĕн курăнать. Пурăнас, пурăнас килет çут тĕнчере! Курас килет çак Украина çĕрĕ тăшманран хăтăлса ирĕклĕн сывланине. Инçетре, инçетре, кăнтăрпа хĕвеланăç хушшинче кăвакарса курăнакан тăвайккисем хыçĕнче Пятихатка хули. Ав ăçталла хăватлăн наступлени туса каймаллаччĕ халĕ Днепр урлă каçакан Хĕрлĕ Çар чаçĕсен. „Анчах та халлĕхе ĕç тухмарĕ-шим вара? Чылай фрица „леш тĕнчене“ ăсатнăччĕ. Татах та нумай пĕтермеллеччĕ. Анчах та пурнăç вĕçĕ çакăнта çитрĕ-шим ĕнтĕ?“—шухăшлать тăшман çарĕнункине пĕччен тăрса юлнă Поляков.

## 11.

Тарăн шухăшпа асапланнă вăхăтра Поляков хăлхисене сасартăк „урра“ кăшкăрнисем пырса кĕчĕç. Вăл кăшкăру сылтăм енчен илтĕнсе, çывхарнăçемĕн çывхарса пырать. „Камсем кăшкăраççĕ-ши кăна? Пирĕннисем е нимĕçсем? Хăшпĕр чух нимĕçсем те „урра!“ кăшкăрнипе улталама пултараççĕ“ шутласа илчĕ Поляков. Акă курать вăл: хăйне çĕнĕрен атакăлама пухăннă нимĕçсем тарма тытăнаççĕ. Кăшкăрни те, перкелешни те вăйланать. Поляков пĕлчĕ ĕнтĕ: „урра!“ кăшкăракансем чăнах та пирĕннех иккен. Вăл савăнса кайрĕ. Наступлени туса килекен Хĕрлĕ Çар чаçĕсене тӳсеймесĕр кĕте пуçларĕ.

Çак вăхăтра сайра кукурузлă уй енчен каласнă сасăсем илтĕнчĕç. Поляков çаврăнса пăхрĕ те—хăйсен ротин ко-

мандирӗ Захаренко тата ротӑ писарӗ пынине курчӗ. Вӗсем хыҫӗнчен карталанса килекен Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем курӑнса кайрӗҫ. Поляков тӳсеймерӗ, сиксе тӑрса хавассӑн кӑшкӑрса ячӗ. Анчах та Поляковпа юратнӑ ротнӑй командирӑн ҫумма-ҫуммӑн тӑрса пӗрле савӑнма тӳр килмерӗ. Ку вӑхӑтра нимӗҫсем автоматсенчен, пулемётсенчен тата миномётсенчен те вӑйлӑн пеме пуҫларӗҫ. Сасартӑк ик-виҫӗ мина чашкӑрса пырса ӳкрӗ. Вӗсенчен пӗри Захаренко патӗнчех ҫурӑлать. Захаренко тӑсӑлса ӳкрӗ.—Ах, пӗтрӗ пирӗн командир!—терӗ Поляков. Унӑн чӗрине вичкӗн ҫӗҫӗ аннӑ пекех туйӑнса кайрӗ. Ҫамрӑк лейтенанта шелленипе тата тӑшман ҫине ҫилӗ килсе капланнипе пӗтӗм шӑм-шакӗ пӗҫерсе килчӗ. Хӑйсен рота командирӗ ӳксе вилнине ун хыҫӗнчен пыракан боецсем те курчӗҫ. Наступлени чарӑнса ларчӗ.

Тӑшман каллех сӗмсӗрленме пӑхать. Ҫапла, рота хӗрсех атака тунӑ вӑхӑтра унӑн командирӗ ӳксе вилни—гвардеецсемшӗн пит те инкеклӗ пулма пултаратчӗ. Гвардеецсем чарӑнса тӑнипе усӑ курса, фашистсем каллех вӗсем ҫине сиксе ларма пултаратчӗҫ. Ҫак вӑхӑтра Поляков Иван сиксе тӑчӗ. Вӑл, окопӗ умне тӑрать те, ҫӗр ҫинче выртакан гвардеец-боецсем енне пӑхса хыттӑн кӑшкӑрать.

— Юлташсем! Ротӑпа команда тӑвассине эпӗ хам ҫине илетӗп... Тӑван ҫӗршывшӑн, Сталиншӑн, тӑшман вӗлернӗ юратнӑ командирӑмӑршӑн—малалла, тӑвансем! Урра!..—кӑшкӑрчӗ вӑл.

Гвардеецсем пурте пӗр ҫын пек кар ҫӗкленсе, хӑватлӑн „урра" кӑшкӑрса, Поляков хыҫҫӑн малалла ыткӑнчӗҫ. Пирӗн боецсем харӑссӑн тӑрса штурмлӑн атака тунинчен нимӗҫсем хӑраса кайрӗҫ. Вӗсем, пӗр йӗркесӗр перкеленӗ хыҫҫӑн, чупсах тарма тытӑнчӗҫ. Ҫав сехетрех пирӗн Днепр урлӑ каҫса ҫитнӗ урӑх подразделенисем те пырса ҫитеҫҫӗ. Вӗсемпе пӗрле ҫӑмӑл орудисем, ҫӑмӑл танксем, миномётчиксем пыраҫҫӗ. Пысӑк вӑй хутшӑнчӗ. Тӑшмана каллех малалла хуса кайрӗҫ. Хӗвел анса лариччен пирӗн

гвардеецсем кунта татах виçĕ ял йышăнса илчĕç, малалла наступлени тумалли çĕр лаптăкне аслăлатрĕç.

Çапла вара гварди ефрейторĕ Иван Поляков геройлăн çапăçнипе тата вăлах малалла хавхалантарса пынипе—Днепр шывĕн тепĕр енчи малтанхи атакăсем çĕнтерӳллĕн вĕçленчĕç.

Рота писарĕ, çамрăках мар паттăр çын, Захаренко лейтенантпа пĕрле малтан чупса пынăскер, каннă вăхăтра Полякова ал тытса чăмăртарĕ. Эпир сана нимĕçсем пĕтерчĕç пулĕ, тесе шутланăччĕ. Эсĕ пĕр пĕччен ултă атакăна сирсе янă иккен. Ху çапах та сывă юлнă!—терĕ вăл хавасланса.

Çав кунхинех каçпала Иван Полякова, вăл нимĕçсен атакисене сире-сире янă чух, хăй пĕччен çеç 259 нимĕç салтакне вĕлерни çинчен пĕлтерчĕç.

12.

Орудисем кĕрлени аяккалла кайса пырать. Снаряд, мина шартлатнисем йăвашланаççĕ. Гвардеецсем фрицсене хĕвеланăç еннелле, малтан-малалла хуса каяççĕ. Ялсенчи чĕрĕ юлнă вата-вĕтĕсем, хĕрарăмсем тĕрлĕ кĕтессенчен, подвалсенчен тухса ирĕклĕн çӳреме пуçлаççĕ, вĕсем хăйсене ирĕке кăларнă боецсемпе командирсене чĕререн тавтăваççĕ, вĕсене çĕнтерӳпе саламлаççĕ.

Пĕр ялти хресченсем никам чĕнмесĕрех шкул патне пухăнаççĕ. Тăван Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе хутшăнса кайса вĕсене ыталаççĕ, хăшĕ-пĕрисем нимĕç фашисчĕсен аллинчи чуралăхра епле асапланни çинчен йĕре-йĕре каласа кăтартаççĕ. Çав сехетрех ялта пĕчĕк митинг пулса иртет. Митингра Хĕрлĕ Çар представителĕсенчен—рота командирĕ, гварди ефрейторĕ Иван Поляков, сăмах тухса калать. Вăл каланине пурте тимлĕн итлеççĕ. Поляков вĕсене Хĕрлĕ Çар вăрçă пуçланнăранпа паян куна çитиччен нимĕç оккупанчĕсене хирĕç епле кĕрешни çинчен, çак Хĕрлĕ Çар пĕтĕм совет халăхĕ пулăшнипе епле вăйланса пыни çинчен калать. Çакăнпа пĕрлех вăл Сталинград

патӗнче тӑшманӑн 330 пинлӗ чи паха çарне хупӑрласа пӗтерсе лартни çинчен те каласа пӗлтерет.

— У-ра!.. У-ра!.. Ура!.. Спасибо Сталин юлташа—пире ирӗке кӑларнӑшӑн!—тесе, ватти-вӗтти пурте харӑсах кӑшкӑрса ячӗç митингри хресченсем Поляков сӑмахне итленӗ хыççӑн.

Тӗлӗнсе кайрӗç тин çеç ирӗке тухнӑ ял çыннисем. Вӗсене нимӗç оккупанчӗсем пӗрмаях Хӗрлӗ Çар пӗтесси çинчен тата тӗнчере Совет влаçӗ текех пулмасси çинчен каласа йӗрӗнтерне пулнӑ. Кам вӗсем каланине итлемен, ялти староста кӑтарса панӑ тӑрӑх, ун пеккисене çакса е персе вӗлернӗ, вӗсене кун çути кӑтартман.

Пирӗн Днепр урлӑ каçнӑ çӗнӗ чаçсем, тин çеç ирӗке кӑларнӑ ял витӗр тухса, малалла—хӗвеланӑçнелле кайса вырнаçнӑ. Вӑрçӑ кӗрлевӗ те хӗвеланӑçнеллех куçса пынӑ.

Акӑ автомашинӑпа политотдел начальникӗ вӗçтерсе çитет. Вӑл, Иван Поляковран кӗске рапорт панине итлет те, ӑна аллинчен чӑмӑртаса боевой заданине питӗ ӑнӑçлӑн та кӑтартуллӑн пурнӑçланӑшӑн тата çапӑçура паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн тавтӑвать.

— Эпир сана Совет Союзӗн Геройӗн ятне пама Верховный Совет Президиумне материалсем тӑрататпӑр,—тесе пӗлтерет вӑл Поляков юлташа.

— Аслӑ Сталиншӑн, тӑван çӗршывшӑн çапӑçма яланах хатӗр,—ответлет Поляков политотдел начальникне.

Хӗрлӗ çар командованийӗ панӑ пысӑк задание чаплӑн пурнӑçланӑ хыççӑнах Иван Поляков Пӗтӗм Союзри Коммунистсен парти ретне кӗме заявлени çырса парать. Парторганизаци ӑна хӗрӳллӗ çапӑçу хушшинчех Ленин—Сталин партийӗ ретне йышӑнать.

Çапла вара Иван Поляковӑн коммунист пулас тенӗ тахçантанхи шухӑшӗ Украинӑри хаяр çапӑçусен хирӗнче, хӑй тунӑ паллӑ çӗнтерӳсем хыççӑн, пурнӑçланчӗ. Коммунист пуласшӑн вӑл пионер тата комсомол речӗсенче 12 çул хушши хастарлӑн ӗçленӗ. Çакӑн çинчен вӑл партбюро ларӑвӗнче те кӗскен каласа пачӗ.

Ленин—Сталин партийĕ ячĕпе совет çыннисем фабрикăсемпе заводсенче, шахтăсемпе рудниксенче, транспортпа ялхуçалăхĕнче вăя шеллемесĕр ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем тăваççĕ. Тискер тăшмана хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче те пирĕн çĕршыв боецĕсем Ленинпа Сталин ячĕпе хавхаланса пысăк çĕнтерӳсем тăваççĕ. Чаплă çĕнтерӳсем тунипе, хăйсем тăван çĕршывăн чăн-чăн патриочĕсем иккенне кăтартса парса, Ленин—Сталин партине кĕреççĕ.

Иван Поляков та, вилĕмлĕ çапăçура яланах аслă çулпуçĕ Сталин ятне тытса пырса, Сталин ячĕпе боецсене атакăра паттăрлатнă. Сталин ячĕпех вăл çĕнтернĕ, боевой заданисене ăнăçлăн пурнăçланă, Сталин ячĕпех Совет Союзĕн Геройĕ ятне илме те тивĕçлĕ пулчĕ.

Халĕ çак 22 çулхи чăваш ачи—коммунист Иван Поляков кăкăри çинче „Ылттăн Çăлтăр" медаль, Ленин орденĕ, Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ тата „За Отвагу"-па „За оборону Сталинграда" медальсем йăлкăшса тăраççĕ.

Иван Поляков хăйĕн тăван ялĕнчен Хĕрлĕ Çара тухса кайнă чух панă сăмахĕсене ăнăçлăн пурнăçларĕ.

Ун пирки вăл халĕ хăйĕн юлташĕсем патне çакăн пек çыру çырса ячĕ:

„Сывă-и, хаклă тусăмсем!

Сире фронтран саламлатăп.

Тусăмсем, сире çакна пĕлтерес тетĕп: эпĕ хам панă сăмаха пурнăçа кĕртрĕм. Хĕрлĕ Çар командованийĕ хушнă ĕçсене кăтартуллăн пурнăçласа пынăшăн мана тăватă хутчен правительство наградине пачĕç. Икĕ хутчен „За отвагу" медальпе, „За оборону Сталинграда" медальпе тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăларĕç.

Иртнĕ вăхăтри çапăçусенче эпĕ 2 хутчен суранлантăм, çавах та вăрçă хирĕнчен тухман.

Нимĕç захватчикĕсене çĕмĕрсе тăкас ĕçре эпĕ яланах хамăн хăюллăха, паттăрлăха тата ăсталăха кăтартса пытăм, çакна пула хамăн автоматăмпа нумай фашиста пĕтерсе тăкрăм. Нимĕç çĕлен-калтисене малалла та пĕр шелleме-

сĕр пĕтерсе пырас тесе, эпĕ халь коммунистсен партине кĕтĕм. Халĕ ак, Днепр леш енне каçса пысăк çĕнтерӳсем тунăшăн, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1943 çулхи октябрĕн 26-мĕшĕнче кăларнă указ тăрăх, мана Совет Союзĕн Геройĕ ятне пачĕç.

Çакăн пек хисеплĕ ят пани мана çынçиекен нимĕçсене татах та вирлĕнрех çĕмĕрме хушать. Халĕ ĕнтĕ манăн пĕр шухăш анчах—гитлеризма хăвăртрах пĕтерсе тăкасчĕ те часрах сирĕнпе курăнăçасчĕ. Чĕрĕ халлĕнех юлсан, халĕ ĕнтĕ эпĕ киле „Ылттăн Çăлтăр" медальпе, Ленин орденĕпе тата ытти орденсене те çакса таврăнатăп.

Пирĕн телей—малалли пурнăçра!

Тепре кураччен!

Малалла, Хĕвеланăç еннелле!

Сирĕн—Иван Поляков.

Февралĕн 1-мĕшĕ, 1944 çул".

## Чăваш АССР Государство Издательстви

**Совет Союзĕн Геройĕсем—хамăрăн земляксем çинчен кăларнă кĕнекесем**

1. **И. Тукташ**—Павел Лаптев
2. **С. Иванов**—Геннадий Габайдуллин
3. **Вылегжанин**—Вячеслав Винокуров
4. **А. Первенцев, А. Ивич**—Ефим Миронов
5. **Станюков, Макаров**—Крылатый мститель (Ф. Н. Орлов çинчен)
6. **Станюков**—Михаил Сапожников
7. **А. Эсхель** Ăмăрткайăк (Ф. Н. Орлов çинчен калакан поэма)
8. **Коллектив.** Иван Поляков (сборник)

Редактор Л. АГАКОВ Тех. ред. БЫКОВ

НТ 00161 Подписано к печати 3/VI—44 г. Зак. № 471 Тираж 3.000 экз

Типография № 1 Упр. полигр. пром. при СНК ЧАССР, г. Чебоксары

Цена 2 руб.

С. ЭЛЬГЕР, А. АНТОНОВ

ИВАН ПОЛЯКОВ

Герой Советского Союза

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ

Чебоксары — 1944